25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ИЮЛЬ
19
ВЫРСАРНИКУН
№ 167 (6102)

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Шкулсен çĕнĕ çурчĕсене халех туса çитермелле

Тăван çĕршывра шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленеççĕ. 1942—43 çулсенчи вĕренӳ çулĕ отечественнăй вăрçăн чи хĕрӳллĕ обстановкинче пуçланать. Халĕ пирĕн шкулсем тата вĕренекенсем çак вĕренӳ çулне те ăнăçлăн иртерес енĕпе хатĕрленӳллĕ ĕçсене туса пыраççĕ. Шкул çурчĕсене юсаççĕ, вутă хатĕрлеççĕ, учебниксене илсе хураççĕ тата ытти ăнрлĕ ĕçсене тăваççĕ.

Кăçал шкулсене вĕренмешкĕн çул çитнĕ çĕнĕ ачасем чылай пырĕç. Вĕсене йышăнма шкулсен хатĕр тăрас пулать, вĕренме условисем туса хатĕрлес пулать. Çул çитнĕ ачасене пурне те вĕренĕве явăçтарас тĕлĕшпе партипе совет организацийĕсен çине тăрса ĕçлес пулать.

Çак енчен илсен, шкулсем валли çĕнĕ çуртсем туса çитерес ĕç пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа та парти правительство çак ĕç валли сахал мар укçа-тенкĕ уйăрса панă. Вăл укçа-тенкĕпе пирĕн пĕтĕмĕшпех тата пĕлсе усă курас пулать.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1942 çулти майăн 8-мĕшĕнче шкул çурчĕсен строительстви пирки ятарласа постановлени йышăнчĕ. Вăл постановленире шкул çурчĕсене туса çитерес тĕлĕшпе çирĕп кăтарту парса хăварнă. Çак постановлени тухнăранпа икĕ уйăх ытла иртрĕ ĕнтĕ. Ăна пурнăçа кĕртмелли сроксем иртсе пыраççĕ, çĕнĕ вĕренӳ çулĕ çывхарса килет.

Анчах шкул çурчĕсене юсаса хатĕрлес, çĕннисене туса пĕтерес тĕлĕшпе хăшпĕр районсенче калама çук начар ĕçлеççĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕ çак кунсенче Шăмăршă райсовет исполкомĕн отчетне итлерĕ. Отчетран çакă курăнчĕ: Шăмăршă райсовет исполкомĕн председателĕ Космовский юлташ тата райçутĕç пайĕн заведующийĕ Куцынина юлташ шкулсен çĕнĕ çурчĕсене туса çитерес тата кивĕсене юсас тĕлĕшпе ку таранччен нимĕн те туман, ВКП(б) райкомĕ те çак ыйтупа интересленмен пулмалла. Космовский юлташ хăйĕн тимсĕрлĕхне строительство материалсем çук тесе тата ытти сăлтавсемпе витме пăхать, анчах хăй вара стройматериалсем шырама та тытăнса пăхман. Челкас-Никольскинчи шкул çуртне тума пĕлтĕрех тытăннă ĕнтĕ. Райисполкомпа райçутĕç пайĕ вăл çурта кăçалхи вĕренӳ çулĕ валли те хатĕрлесе çитерме шутламаççĕ, хăйсене панă укçа-тенкĕпе çуррипе те усă курман.

Кăçал Первомайскинчи тата Советскинчи шкулсен çĕнĕ çурчĕсене ĕçе ямалла. Анчах вăл çуртсене туса çитерес ĕç те çителĕклĕ пырать теме çук-ха. Мĕшĕлтетсе ĕçлес йăла кунта та сисĕнет.

Пирĕн партипе правительство ачасене вĕрентсе воспитани парас ĕçе яланах пысăк вырăна хурса хакланă. Отечественнăй вăрçă пынă вăхăтра та пирĕн ачасене вĕренме, ӳсме лайăх майсем туса панă. Килес вĕренӳ çулĕ ачасемшĕн ответлă çулталăк пулса тăрать. Çавăнпа та вăл вĕренӳ çулне лайăх хатĕрленсе кĕтсе илессишĕн çине тăрса кĕрешмелле.

Уйрăмăнах вутă хатĕрлес ыйту çине тимлĕн çаврăнса пăхни кирлĕ. Кĕçех тырă вырса пуçтарас ĕçсем пуçланаççĕ, ун чухне вăхăт хĕрӳллĕ пулать, çынсем те, туртăм вăйĕ те кирте пулаççĕ. Çавăнпа та шкулсене валли вутă хатĕрлес ĕçе халĕ, тырă вырма пуçличчен вĕçлеме тăрăшас пулать. Кунсăр пуçне, вĕренекенсем валли партăсене юсаса хатĕрлесси те, вĕренме кирлĕ ытти хатĕрсемпе пособисене çителĕклĕ тарамах пухса хурасси те вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн тумалли пысăк ĕçсем пулса тăраççĕ. Анчах вĕсем те халĕ çителĕксĕр пулса пыраççĕ-ха. ЧАССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлесе çитерес енĕпе нумай хут лайăхрах ĕçлеме тăрăшмалла.

Совет правительстви ачапа амăшĕшĕн тăрăшни

Продовольстви карточкисем тăрăх памалла тунă хуласенче йывăр çын пулнă хĕрарăмсене, вĕсем йывăр çын пулнăранпа 6 уйăх çитнĕ пулсан тата ача çуратнă хыççăн 2 уйăх хушши, çавăн пекех кормилицăсене те продовольстви карточкипе пама палăртнă нормăран иртерсе апат-çимĕç продуктĕсем сутас ĕçе кăçалхи июль уйăхĕнчен пуçласа организацилеме СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ СССР Наркомторгне кăтарту панă.

Пĕр çын пуçне кашни уйăхрах нормăран иртерсе çакăн чухлĕ сутмалла:

çу — 400 грамм,
сахăр — 300 грамм,
кĕрпе — 600 грамм,
чĕрĕ сĕт — 6 литр.

Промышленность таварĕсене карточкăпа памалла тунă хуласенче çĕнĕрен çуралнă ачасем валли, ачасен консультацийĕсем панă справкăсем тăрăх, карточкăсăрах кĕпе-йĕм сутас ĕçе организацилеççĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 17-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июлĕн 17-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Воронеж** районĕнче тата **Миллеровăран** кăнтăртарах вырăнта противника хирĕç çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Июлĕн 16-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 90 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 265 автомашинине, горючи тултарнă темиçе автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, зенитнăй артиллерин 2 дивизионне пусарса лартнă, боеприпассен 5 складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине 4 батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Воронеж районĕнче пирĕн войскăсем хăшпĕр участоксенче чылай хутчен контратакăсем туса нимĕçсене пысăк сиен кӳнĕ. Хаяр çапăçура гвардейски чаçри боецсем противникăн 680 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, унсăр пуçне нимĕçсен 3 танкне çĕмĕрнĕ, 4 орудине тата боеприпассем тиенĕ 13 машинине пĕтерсе тăкнă. Çав участокрах пирĕн тепĕр часть 400 гитлеровеца ытла тата минометсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă. Совет танкисчĕсемпе артиллерисчĕсем тăшмана ăнăçлăн çапа-çапа салатаççĕ. Нимĕçсен пысăк отрячĕ Д. ялĕ патĕнче пирĕн пехотнăй батальона хупăрласа илме хăтланнă. Демидов юлташ командир пулса ертсе пыракан артиллери чаçĕнчи боецсем орудисене уçă позицие илсе тухса вырнаçтарнă та противник çине тӳррĕн пеме тытăннă. Артиллеристсем пин гитлеровеца яхăн пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн боецсем нимĕçсен 15 танкне персе çĕмĕрнĕ, 14 орудине пĕтерсе тăкнă, противникăн 3 полкĕн штабĕсене çапса аркатнă тата документсем, трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Миллеровăран кăнтăртарах вырăнта çапăçусем пыраççĕ. Пирĕн войскăсем противникăн хаяр атакисене сире-сире тăрахаççĕ. Пĕр участокра нимĕçсен 12 танкĕ тата пехотăна турттарса пыракан 60 автомашини пирĕн чаçăн тылне кĕрсе кайнă пулнă. Хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Çав çапăçу вăхăтĕнче нимĕçсен 8 танкне тата 400 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. К. пунктран инçех мар вырăнта пирĕн танксем, хамăрăн пехотнăй чаçсене каялла чакма хӳтĕлесе пырса, пĕр кун хушшинче 4 хутчен контратака тунă, 1.200 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, противникăн 5 танкне, 18 автомашинине тата 7 пулеметне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн уйрăм участокĕсенче вырăнти çапăçусем пулса иртнĕ. Противникăн пехоти, танксен групппи пулăшса пынипе, пирĕн оборонăн малти линине татса кĕме хăтланнă. Пирĕн бронебойщиксем харăс персе нимĕçсен 8 танкне пĕтерсе тăкнă. Вара нимĕçсен пехоти, хăйсен танкĕсен пулăшăвĕсĕр тăрса юлнăскер, пысăк çухатусем тӳсе каялла чакнă.

* * *

Лейтенант Фадеев командир пулса ертсе пыракан саперсем противникăн огневой точкисем патне систермесĕр пырса кĕнĕ. Красноармеец Васильев ертсе пыракан темиçе боец дзота гранатăсем нумай пăрахнă, çав дзотра гитлеровецсем вырнаçса ларнă пулнă. Боецсен тепĕр ушкăнĕ Киселев сержант ертсе пынипе противникăн 2 огневой точкине сирпĕнтерсе янă. Çак операци вăхăтĕнче саперсем нимĕçсен 25 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ.

* * *

Разведчиксем Анорхинпа Денисьев противникăн тылĕнче нимĕç салтакĕсен ушкăнне тĕл пулнă. Икĕ енчен те хире-хирĕç персе тăнă вăхăтра разведчиксем 5 гитлеровеца вĕлернĕ, иккĕшне тыткăна илнĕ, ăна хăйсен чаçне илсе пынă.

* * *

Нимĕçсем пирĕн боеца Щеголев юлташа хупăрласа илсе тыткăна илме хăтланнă. Красноармеец-казах Исалиев хăйĕн юлташне çăлса хăварма ыткăннă. Щеголевпа Исалиев пĕрле пулса 10 гитлеровеца вĕлернĕ те хăйсен взвочĕ патне пырса хутшăннă.

* * *

Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен В. тата Т. юлташсем командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕсем противникăн çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Войскăсем турттарса пыракан 10 вагон тата боеприпассем тиенĕ 2 вагон ванса кайнă.

* * *

Нимĕçсен 383-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 533-мĕш полкран хăйĕн ирĕкĕпе тыткăна парăннă салтак Рихард М. çапла каласа панă: «Воронеж патĕнчи 10 кун хушшинчи çапăçусенче 533-мĕш полк хăйĕн личнăй составĕнчен çуррине ытла çухатрĕ. Ротăсемпе батальонсенче çынсем питĕ те сахал тăрса юлчĕç. Хĕçпăшалсемпе техника питĕ нумай пĕтрĕ. Сăмахран, манăн ротăра 3 автоматпа пĕр пулемет çеç юлчĕ».

* * *

Югославири партизансем итальянецсене чылай хуласенчен хăваласа кăларнă. Оккупантсен пусмăрĕ айĕнче хĕн-хур тӳснипе асапланса çитнĕ халăх партизансене питĕ те хапăлласа кĕтсе илнĕ. Патриотсем оккупантсенчен трофейăсем нумай тытса илнĕ. Хуласенчен пĕринче кăна партизансем 19 пулемет, 250 винтовка, темиçе автомашина, боеприпассемпе çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Нимĕçсемпе Итали захватчикĕсен халĕ ĕнтĕ партизансене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте авиаципе те усă курма тивет. Анчах та партизансем хăйсен базисене лайăх пытарса усраççĕ тата пехотăн хĕçпăшалĕпе усă курса противникăн самолечĕсене пере-пере антараççĕ.

Июлĕн 18-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Июлĕн 18-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Воронеж** районĕнче тата **Миллеровăран** кăнтăртарах вырăнта çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Воронеж районĕнче çапăçусем пынă, çав çапăçусенче пирĕн чаçсем противника пăртак каялла чакарнă. Нимĕçсем питĕ вăйлăн хирĕç тăраççĕ, хăйсем йышăнса илнĕ позицисене хăйсен аллинчех хăварма пĕтĕм вăйран тăрăшаççĕ. Пĕр участокра артиллерипе минометсенчен персе хатĕрленнĕ хыççăн пирĕн танкистсем противник тăракан вырăна çĕмĕрсе кĕнĕ те артиллерин виçĕ батарейине тата минометсен 2 батарейине аркатса тăкнă. Танксем хыççăн çапăçăва пехотинецсем кĕрсе кайнă. Штык вĕççĕн çапăçса, 350 гитлеровеца вĕлернĕ, гитлеровецсем вара васкасах каялла чакнă, çапăçу хирĕнче çĕре чавса лартнă 3 танк, 7 оруди, 4 пулемет, 9 миномет тата боеприпассен складне пăрахса хăварнă. Тепĕр участокра противникăн пехоти, танксем пулăшса пынипе, пирĕн позицисене атакăланă. Дулин юлташ командир пулса ертсе пыракан артиллеристсем çав атакăна сирсе янă чухне нимĕçсен 3 танкне пĕтерсе тăкнă тата 300 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Миллеровăран кăнтăртарах вырăнта пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе мотопехотин пысăк вăйĕсен йышлă атакисене сире-сире яраççĕ. Пĕр участокра пирĕн артиллеристсемпе бронебойщиксем пĕр кун хушшинче нимĕçсен 17 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Совет пехоти те противникăн техникине çапа-çапа аркатать. Пĕр подразделенири боецсем çеç те, гранатăсем тата çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем ывăтса, 5 танка персе çĕмĕрнĕ тата çунтарса янă. Çав çапăçура гитлеровецсен 1.200 салтакĕпе офицерĕ ытла вилнĕ е аманнă.

Наступлени тăвакан противникăн тылне пирĕн кавалеристсем хăюллăн кĕрсе кайнă. Вĕсем нимĕçсен колоннине сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă, горючи тултарнă 4 автоцистернăна тата боеприпассемпе продовольстви тиенĕ 9 автомашинăна çунтарса янă.

* * *

Шаренков юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенири гвардеец-минометчиксем (Калинин фрончĕ), противникăн пĕр çĕре пухăнса тăнă войскисем çине персе, минометсен 2 батарейине, 2 оруди тата 250 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Вобылый юлташ командир пулса ертсе пыракан минометчиксем, противникăн колонни çине вăйлăн персе тăрса, пехота ларса пыракан 13 автомашинăна тата боеприпассем тиенĕ 20 лава пĕтерсе тăкнă.

* * *

Зимин майор командир пулса тăракан чаçри летчиксем (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ) 3 уйăх хушшинче противникăн 87 самолетне персе ӳкернĕ. Кондратьев майор нимĕçсен 12 самолетне, Лазарев майор—10 самолетне, Волков лейтенант—11 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Черкас лейтенант, механик-водитель Патрушев тата старши политрук Троекуров ларса пыракан танк пĕр çапăçура нимĕçсен 2 танкне, 8 орудине пĕтерсе тăкнă, 12 дзотне ишсе антарнă тата нимĕçсен 50 салтакĕпе офицерне çити таптаса вĕлернĕ.

* * *

Противникăн атакине сирсе ярса, Сазонов юлташ командир пулса тăракан чаçри боецсен ушкăнĕ нимĕçсен 6 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Красноармеец Кужлев юлташ противотанковăй пăшалтан темиçе хут персе, нимĕçсен «Хеншель—126» йышши самолетне ӳкернĕ, çав самолет противникăн артиллерине пирĕн çине тӳрĕ пеме кăтартса тăнă пулнă.

* * *

Нимĕçсен 18-мĕш танковăй дивизийĕнчи 52-мĕш мотополкăн 5-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ обер-фельдфебель Ганс Кухенбеккер çапла каласа панă: «Июлĕн 6-мĕшĕнче ирхине вырăссем пирĕн позицисем çине вăйлăн пеме тытăнчĕç. Снарядсем пирĕн блиндажсемпе огневой точкăсем çине пурин çине те тенĕ пекех ӳке пуçларĕç. Манăн взводра 30 çыннччĕ. Вĕсенчен иккĕшĕ çеç чĕрĕ тăрса юлчĕç: пĕри—эпĕ, тепри—унтер-офицер Отто Райер. Ытти взводсем те питĕ йывăр çухатусем тӳсрĕç. 5-мĕш ротăна пĕрре унччченех çапса аркатнă пулнă. В. пункчĕ патĕнче унăн 160 çын вилсе тата аманса юлнă. Май уйăхĕн вĕçĕнче ротăна 110 çын хушса панă, вĕсенчен пысăк пайĕ—гитлерла çамрăксен союзĕнче тăракан ачасем. Вăл ачасен пуçĕсене çакăн пек шухăшпа тултарнă: вăрçă, ютçĕршывсен çĕрĕсене туртса илесси тата пуянлăхсем—çаксем вĕсем чăн-чăн нимĕçĕн тивĕçĕ пулса тăраççĕ, тенĕ вĕсене. Хĕвелтухăçĕнчи вăрçăн чечекĕсене татăлса пăхсан, вĕсем часах ăса кĕрĕç тесе шухăшлатăп эпĕ».

* * *

Нимĕç захватчикĕсем Норвеги çаплах çаратаççĕ. Хальхи вăхăтра оккупантсем халăхран мĕнпур велосипедсене туртса илеççĕ. Оккупацилле влаçсем нумаях пулмасть 100 ытла авторемонтнăй мастерскоя туртса илнĕ.

* * *

Баку нефтянникĕсем нефть кăлармалли шăтăксене хăвăрт пăраламалли майпа пăраласа шăтараççĕ. 1212-мĕш номерлĕ шăтăка графикра кăтартнă 23 кун вырăнне 16 кун хушшинче шăтарса çитернĕ. Паллă мастерăн орденоносец Баба-Кафар-Мурадовăн бригади 12 кун хушшинче заданире кăтартнă 60 метр вырăнне 106 метр тарăнăш шăтарнă.

Нимĕçсем войскăсене Франциран самолетсемпе илсе килеççĕ

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНĔÇ ФРОНЧĔ, июлĕн 16-мĕш. (**ТАСС спецкорĕ**). Нимĕçсен 8-мĕш пехотнăй çăмăл дивизийĕнчи 28-мĕш полкра пулнă обер-ефрейтор Вальтер Миллер, эпир Ильмень кӳлли районĕнче тыткăна илнĕскер, çапла каласа панă: Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçăра ытла та пысăк çухатусем тӳснипе, гитлеровецсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта Францин оккупациленĕ пайĕнчен войскăсем тăтăшах куçарса тăраççĕ.

Миллер пулнă дивизи 1941 çулти май уйăхĕнчен пуçласа юлашки вăхăтчченех Парижра тăнă. Унта вăл патруль тата хурал ĕçĕсене туса тăнă. Унтан ăна пĕтĕмпех самолетсем çине лартса Ильмень кӳлли районне куçарнă.

— Французсем пире курайманççĕ, — тет Миллер. — Парижра пĕр нимĕç салтакĕ те хăйĕн пурнăçĕшĕн пăшăрханмасăр тăма пултараймасть. Нумаях пулмасть эпĕ салтаксен пĕр ушкăнĕпе пĕрле Парижăн çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнчи пĕр мунчара çăвăнтăм. Сасартăк такам чӳречерен икĕ граната пăрахрĕ. Икĕ салтак вилчĕç, темиçе çын аманчĕç. Çав кварталри халăха вара икĕ эрне хушшинче каçхине 6 сехет иртсен урама тухма чарса лартнă. Кашни килрен заложник тытса хупнă, вĕсене кайран асаплантарса вĕлернĕ.

И. ДЕНИСОВ.

Гитлеровецсем салтаксене орудисем çумне сăнчăрласа хураççĕ

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, июлĕн 16-мĕш. (**ТАСС спецкорĕ**). Пирĕн артиллери нимĕçсен икĕ противотанковăй орудине персе çĕмĕрнĕ, вĕсен прислугисене вĕлерсе пĕтернĕ.

Пирĕн боецсем çав орудисем патне пырсан, вĕсем çакăн пек япала курнă: кашни тупă çумĕнче икĕ салтакăн вилли выртнă. Виçĕ салтакăн сулахай аллине, тăваттăмĕш салтакăн сулахай урине лафет çумне сăнчăрласа хунă.

Вăл вилесем çумĕнче документсем пулман. Çав участокра тыткăна лекнĕ салтаксем каланă тăрăх, унта нимĕçсен 56-мĕш дивизийĕнчи 156-мĕш артиллери полкĕ çапăçнă.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Пирĕн чаçсем Воронеж районĕнче фашистсене хăватлăн пыра-пыра çапаççĕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 17-мĕш. (**ТАСС спецкорĕ**). Воронеж районĕнче хаяр çапăçу пырать. Хăшпĕр участоксенче совет войскисем контратакăсем тăваççĕ. Тăшманăн ирĕксĕрех наступленирен оборонăна куçма лекет. Анчах кунти лару-тăру малтанхи пекех йывăр. Çавтери хаяр çапăçусенче пирĕн чаçсем пуçарулăха тăшманран хăйсен аллине тытса илеççĕ, хĕвеланăçнелле çĕмĕрсе пырса хăйсен позицийĕсене лайăхлатаççĕ.

Танкистсемпе артиллеристсем, пехотинецсемпе летчиксем Воронежран кăнтăр енче тăшмана хăватлăн пыра-пыра çапаççĕ. Кунта хăшпĕр вырăнсенче нимĕçсем нимĕн йĕркесĕр каялла чакнă. Фашистсен пĕр пехотнăй дивизийĕ пысăк сиен курнă. Совет чаçĕсем çав дивизийĕн 202-мĕш пехотнăй полкне пуçĕпех çапса аркатнă, 222-мĕш полка вара пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕ тăшман салтакĕсен виллисемпе тата нимĕçсен пăрахса хăварнă çар техникипе витĕннĕ. Тыткăна илнисем пур, секретлă документсем нумай тытса илнĕ. Çав участокра малалла наступлени туса пырса, пирĕн чаçсем ĕнер халăх пурăнакан икĕ пункта гитлеровецсенчен ирĕке кăларнă. Вăйлă çапăçусенче Фирсов юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри красноармеецсем, командирсемпе политработниксем уйрăмах палăрнă.

Нумай вăхăт хушши пынă çапăçусем хыççăн совет войскисем Дон урлă хĕвеланăç енне каçнă. Хĕвеланăç енчи çыранра хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Штык вĕççĕн тăрса çапăçса, пирĕн пехотинецсем тăшман пехотин батальонне пĕтерсе тăкнă. Фашистсем, пирĕн боецсем вăйлăн хĕссе пынине тӳссе тăраймасăр, халăх пурăнакан пĕр пунктăн хĕрринчен каялла чакнă. Икĕ енĕ те вăйлăн тăрса çапăçаççĕ, çапăçу хĕрсех пырать.

Фашистсен çухатăвĕсем татти-сыпписĕр ӳсеççĕ, вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсем вуншар пин çын вилнĕ, çĕршер танк, çĕршер самолет, çĕршер орудипе автомашина çĕмĕрĕлнĕ тата пĕтнĕ.

Юлашки икĕ кун хушшинчи çапăçура кăна пирĕн танксен пĕр батальонĕ нимĕçсен 520-мĕш мотобатальонĕн штабне çапса аркатнă, горючи складне сирпĕнтерсе янă, нимĕçсен 21 дзотне тата 9 блиндажне çĕмĕрнĕ, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1.000 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Тăшмана çирĕппĕн атакăласа, танкистсем фашистсен 5 танкне, 12 орудине, 1 минометне, 52 пулеметне, танксене хирĕç пемелли 31 пăшалне, бронемашинисемпе автомобилĕсене нумай пĕтерсе тăкнă. Пирĕн танксен батальонĕн çухатăвĕсем пысăк мар—унăн 2 автомашина пĕтнĕ, 6 çын вилнĕ, 14 çын аманнă.

Халĕ кăна тепĕр чаçран хыпар илнĕ. Пĕр кун хушшинчи çапăçусенче вăл тăшман пехотин 3 батальонне, нимĕçсен 34 танкне, 6 пулеметне, танксене хирĕç пемелли 14 орудине тата 19 огневой точкине пĕтерсе тăкнă.

Çав чаçри боецсем противникăнне 11 пулемет, 26 автомашина тата 22 автомат тытса илнĕ.

Нимĕçсем хăйсен инçетри тылĕнчен тăтăшах резервсем илсе килсе тăраççĕ. Нумай кунсем хушши çул çинче пулнă пополненисене çийĕнчех çапăçăва кĕртеççĕ. Фронтăн пĕр участокĕнче венгер салтакĕсемпе офицерĕсене тыткăна илнĕ. Тыткăнрисем Венгрин 34-мĕш полкĕ июлĕн 12-мĕшпе 13-мĕш хушшинче хăйĕн составĕнчен 60 процентне çухатни çинчен пĕлтернĕ. Вилнисем хушшинче полк командирĕ—полковник та пур. Ĕнер çав полка мадьярсен батальонĕ килсе çитнĕ. Вĕсене вилнĕ салтаксен винтовкисемпе хĕçпăшаллантарнă та çавăнтах çапăçăва кĕртсе янă.

Дон çийĕнчи хаяр çапăçусем пĕр минутăлăха та лăпланмаççĕ. Пирĕн авиаци, пехота, танксен соединенийĕсем тата артиллери нимĕçсен переправисене ишĕлтереççĕ, гитлеровецсене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ, вĕсен тактикăллă планĕсене аркатса яраççĕ. Воронежа паттăррăн хӳтĕлекенсем тăшмана паракан отпорăн хăвачĕ ӳссех пырать.

Г. КРЫЛОВ.

Пирĕн землякcем

Вăрманти çапăçу

Тĕксĕм вăрман, ĕмĕртенпе ларакан пысăк юмансемпе çăкасем, питĕ илемлĕ кӳлĕсем — çакăн пек Брянск çывăхĕнчи вырăнсем.

Вăрманта шăп. Анчах çак шăплăх ултавлă.

Хурçă çĕлĕк тата симĕс халат тăхăннă, алла автомат тытнă красноармеец симĕс çулçăллă шĕшкĕ тĕмĕ патĕнче тăрать. 90 метр хушши вырăн кăна ăна нимĕçсенчен уйăрса тăрать. Кунта — малти лини. Инçетрех мар ларакан курăксем патнелле тинкерсе пăхсан, нимĕçсен блиндажĕсене те пĕлсе илме пулать, йывăç тĕмĕсен çулçисемпе турачĕсем хумханнă çĕрте вара тăшман хуралĕсем тăраççĕ. Блиндажа хирĕç—блиндаж, секрета хирĕç—секрет.

— Акă вăл пирĕн геройсенчен пĕри, — тесе калать автоматчик çине кăтартса комиссар Тихон Григорьевич Попов. — Ун патне каяр-ха.

Автоматчик Гаврил Анисимов, хăй сăнаса тăракан участока куçран вĕçертмесĕр, хавассăн хăй çинчен каласа парать. Вăл — чăваш. «Сталь» колхозри рядовой колхозник, 1905 çулта çуралнă, партире тăмасть. Нимĕç захватчикĕсене пĕтерсе тăкма хăйĕн ирĕкĕпе фронта кайнă. Хăйĕн геройла ĕçĕсем çинчен калаçма тытăнсан, Анисимовăн часах сасси çĕтет, вăл хăйĕн çинчен калама юратмасть.

— Ытла та палăрса тăракан нимле ĕçех те туман, вăйлăн çапăçрăм кăна.

Вăрăм хырсен тăррине шуçăм килни палăрнă çеç-ха, кăвак тĕтре витĕр йывăç кукисем те курăнман, çав вăхăтра вăрмана вут-хĕмлĕ çил-тăвăл пырса кĕнĕ. Тымарĕпех кăкланнă йывăçсем, çĕр çĕкленсе сирпĕннĕ, йывăç тураттисен кукисем çунма пуçланă. Нимĕçсем ĕнер лейтенант Легов командир пулса ертсе пыракан подразделени хăюллăн тапăнса йышăнса илнĕ çӳллĕ вырăна штурмлама хатĕрленеççĕ.

Нимĕçсем йывăр тупăсенчен пеме тытăнсанах Легов çакăн пек тума шут тытнă.

— Пурин те йывăç кукисем патне çывăхарах куçмалла! — тесе приказ панă вăл.

Подразделени хăвăрт йывăç кукисем патне куçнă, çапла вара нимĕçсен снарячĕсем ӳкекен вырăнтан пĕр çухатусăр тухнă. Нимĕçсем йывăç кукисем çине пеме пултарайман. Вĕсенчен 90 метрта нимĕçсен пехоти çапăçăва тухма хатĕрленсе пырать. Позицие тасатас тĕллевпе нимĕçсем 40 минута хушши персе тăнă. Пеме чарăнсан, нимĕçсем хытă кăшкăра-кăшкăра позицисем хушшинчи вырăн урлă каçнă та çывăхри тĕмесем патĕнче пытаннă. Пирĕн боецсем пемен, лейтенант сигнал парассине кĕтнĕ. Унччен те пулмасть, Легов ура çине тăнă та хыттăн аллине сулнă. Автоматсемпе пулеметсем нимĕçсене утă çулнă пек çулса тăкнă. 100 гитлеровец ĕмĕрлĕхех йывăç кукисем çинче юлнă.

Çапăçу йĕри-тавра вырăнта пур çĕрте те пынă. Резервсем илсе пырса, пирĕн позицисене штурмлама нимĕçсем виççĕмĕш хутчен тапăннă. Çакă атакăн чи вăйлă хумĕ пулнă. Анчах тăшман пирĕн автоматчиксен хăюллăхне, хастарлăхне, çирĕплĕхне тата вĕсем хăвăрт пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçма пултарнине шута илмен. Вăрманта çапăçнă çĕрте совет воинĕсен çак паха енĕсем пысăк вырăн йышăнса тăнă. Нимĕçсем пирĕн оборона ăшне кĕрсе кайсанах, вăрманти çапăçу тепĕр майлă пулса пыма тытăннă. Хире-хирĕç тăрса çапăçни, кĕтмен çĕртен сиксе тухса тапăнни, вăйсене вăрттăн майпа пĕр çĕртен тепĕр çĕре куçарни, йывăç сахал купаланса выртнă çĕрте ушкăнăн-ушкăнăн, пĕчченшерĕн штык вĕççĕн тытăçса çапăçни, — çаксем пурте ĕнтĕ вăрманти çапăçура пулнă.

Уйрăмах пирĕн позицин центрне хӳтĕлекен боецсен ушкăнĕн вăйлăн çапăçма тивнĕ. Шăпах çакăнта ĕнтĕ красноармеец Анисимов юлташ хăйне палăртнă. Хăйсен ушкăнне тактикăллă маневр туса каялла чакма май парас шутпа, вăл йывăç çине улăхса ларнă та унтан фашистсем çине тĕллесе пенĕ. Çав вырăнта 19 нимĕç пирĕннисем тăракан вырăна кĕрсе кайма хăтланнă, анчах çав нимĕçсенчен пĕри те Анисимов тĕл пенинчен çăлăнса юлайман. Анисимовăн часах патронсем пĕтнĕ, вăл вара çĕр çине аннă. Кунта кĕтмен çĕртенех ăна нимĕçсен ӳсĕр салтакĕсем йĕри-тавра хупăрласа илнĕ.

— Вырăс, парăн — тесе кăшкăрнă вĕсем.

Штык вĕççĕн тытăçса хаяррăн çапăçнă çĕрте вăл тăватă нимĕçе чиксе вĕлернĕ, ыттисем тарнă.

Çак кунхине нимĕçсем пирĕннисен позицийĕсем çине çичĕ хутчен атака тунă. Вĕсен атакисем кашнинчех путланнă. Вăрманти çапăçура Легов юлташăн подразделенийĕ гитлеровецсене 250 çынна ытла пĕтерсе тăкнă, пирĕннисен вара 4 çын вилнĕ, 11 çын аманнă.

Н. ИЛЬИНСКИЙ.

(«**Правда**» хаçатра тухнă статьяран).

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановление сӳтсе-яваççĕ

Тухăçлă тырпула организованно пухса кĕртер

ТАВАЙ, июлĕн 17-мĕш. (Телефонпа). Районри партипе совет активĕ кăçалхи пулăх тырпула пухса кĕртме хатĕрлене ĕçре пулăшма колхозсене кайрĕ. Паян районри колхозниксемпе колхозницăсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1942 çулти тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен йышăннă постановление сӳтсе-яваççĕ.

Кăçал пирĕн колхозсен тырпулсене пухса кĕртес ĕçе уйрăмах организованно туса ирттермелле. Партипе правительствăн постановленийĕнче çак ответлă та пысăк ĕçсене мĕнле майпа туса ирттермеллине кăтартса панă. Колхозниксемпе колхозницăсем ăна ырласа йышăнаççĕ, вăл вĕсен кулленхи программи пулса тăрать.

Районри чылай колхозсем ĕç планĕсем тунă, тырăсене пухса кĕртме тимлĕн хатĕрленеççĕ. «Майăн 1-мĕш» колхозра постановление сӳтсе-явнă хыççăн колхозниксем тырă пухса кĕртес тĕлĕшпе конкретнăй сĕнӳсем пачĕç. Тырпулсене пухса кĕртнĕ çĕрте колхоз кăçал пысăк тимлĕхпе ĕçлеме пулать. Колхозниксемпе колхозницăсем уборкăна тухиччен колхоз пуçлăхĕнчи ытти ĕçсене хăвăрт туса çитерме тăрăшаççĕ. Колхоз 120 гектар утă çулнă, ку ĕçре колхозниксем пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ.

Партипе правительствăн постановленине «Горьковская Коммуна», «Свободный труд», «Искра Ильича» тата ытти колхозсем те сӳтсе-явнă. Уборкăри ĕçсен планне тунă, колхозниксем ĕçе пур енĕпе те хатĕрленсе тухса, тырпулсене пысăк пахалăхпа пухса кĕртме сăмах параççĕ.

Ĕнер МТС бригадирĕсен, машиноведсемпе комбайнерсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Партипе правительствăн постановленине ĕçе кĕртес тесе, трактористсемпе комбайнерсем, машиноведсем халичченхинчен нумай хут лайăхрах ĕçлеме пулчĕç. Комбайнер Прокопий Кузьмин хăйĕн комбайнĕпе 250 гектар, коммунист Захар Петров 280—300 гектар тырă вырма сăмах пачĕç.

В. ЧЕРНОВ.

ЮЛСА ПЫРАКАНСЕМ ПУЛМАЛЛА МАР

ÇĔМĔРЛЕ, июлĕн 18-мĕш. (Хамăр корр.). Районри колхозсенче СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление сӳтсе-яваççĕ. Колхозниксем тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме пулăççĕ.

Мыслецри «Ударник» колхоз уборкăна хатĕрленсе çитсе пырать. Ялхуçалăх машинисене юсаса çитернĕ, тырăсене вырнă çĕрте косилкăсемпе те усă курма шутлаççĕ. Тырăсене алăпа вырма 70 çурла тата кĕреплелле çавасем хатĕрленĕ. Çĕнĕ тырра кĕртме итемсене тасатса хунă.

Колхоз 90 гектар çинчи утта çулса пуçтарнă, государствăна 120 центнер утă леçсе парса обязательствăна ирттерсе тултарнă.

Анчах та районри хăшпĕр колхозсем тырпулсене пухса кĕртес ĕçе хатĕрленессинче кая юлса пыраççĕ-ха. Тырпулсене кĕске срокра пĕр тăкаксăр пухса кĕртме кашни колхозăн тĕплĕн хатĕрленсе çитмелле. Партипе правительствăн постановленинче кăтартнă ĕçсене колхозсен паян кунах тимлĕн пурнăçлама тытăнмалла.

МТС ХĔРӲЛЛĔ ĔÇРЕ

ЧКАЛОВОКОЕ, июлĕн 18-мĕш. (Телефонпа). Ĕнер кăнтăрлахи канăу вăхăтĕнче машинно-тракторнăй станцире трактористсемпе комбайнерсен тата машиноведсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура МТС политотделĕн начальникĕ Шакуров юлташ СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление вуласа ăнлантарчĕ. Кун хыççăн комбайнерсемпе трактористсем хăйсем уборкăна епле хатĕрленнине тишкерсе тухрĕç.

Партипе правительствăн çак постановленийĕ калăпи вăхăтра питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Партипе правительство ялхуçалăхĕнчи мĕнпур работниксене, ĕççыннисене, колхозсемпе МТС-сене 1942 çулти тырпула пĕр пĕрчĕ тăкмасăр вăхăтра пухса кĕртме хушаççĕ.

МТС коллективĕ çак аслă задачăна тарăнăн ăнланать. Трактористсемпе комбайнерсем тырпулсене пухса кĕртес ĕçе лайăх хатĕрленсе тухас тесе тимлĕн ĕçлеме пулчĕç.

Паянхи куна 18 комбайн ĕçе тухма хатĕр. Комбайнерсем пур комбайнсене те июлĕн 20-мĕш тĕлне юсаса çитерме, уборкăри ытти машинăсене июлĕн 25-мĕш тĕлне пĕтĕмпех юсаса çитерме сăмах пачĕç. Комбайнер Мозяков хăйĕн «Коммунар» комбайнĕпе кăçал 200 гектар пухма, Артемьев, Суворов комбайнерсем 250-шар гектар вырса пухма обязательствăсем илчĕç.

П. НИКОЛАЕВ.

Сталин юлташăн приказĕ çине ĕçпе ответлеççĕ

ПАРАЧКАВ. «Çĕнĕ пурнăç» колхоз Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн нумай лайăхрах ĕçлеме пуçларĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем ялхуçалăхĕнчи пур ĕçсене те пысăк çĕкленӳпе туса пыраççĕ. Звеносемпе ĕçлесси кунта тĕп вырăн йышăннă. Колхоз бригадинчи звеносем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ, ăмăртăва кашни колхозникпе колхозница активлăн хутшăннипе колхоз ĕç тухăçлăхне вăйлăн çĕклерĕ, ĕç дисциплинине татах та çирĕплетрĕ. Звеносем кашни гектар çинчен 18 центнер тĕштырă пухса илессишĕн кĕрешеççĕ.

Çак кунсенче колхоз государствăна сĕт-çу, аш-какай тăратас плана пĕтĕмпех тултарчĕ. 1942 çулшăн государствăна тĕштырă тăратас плана 50 процента çити тултарнă.

Колхозра социализмлă ăмăрту сарăлса пырать, колхозниксемпе колхозницăсен ĕçлес кăмăлĕ пысăк. Вĕсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ.

МОИСЕЕВА.

Канашри вагонсем юсакан завода Хĕрлĕ Ялав памалла тунă

Професcиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ тата СССР Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ 1942 çулти июнь уйăхĕнчи ĕçсен итогĕсене пăхса тухнă хыççăн, социализмлă ăмăртура малта пыракан предприятисенчен пĕри—Канашри вагонсем юсакан завод (директорĕ Поздняков юлташ, партбюро секретарĕ Сорокин юлташ, завком председателĕ Киселенко юлташ) пулнине палăртнă.

Вагонсем юсакан завода СССР Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне памалла тунă.

Вулав çурчĕсем—массăллă ĕçĕн центрĕсем пулса тăмалла

Кашни ялта пекех вулав çурчĕ е колхоз клубĕ пур. Вĕсен ĕçне мĕн чухлĕ лайăх организацилене, ялти культурăллă-массăллă ĕç çавăн чухлĕ лайăх пулса пырать.

Ейпеç (Елчĕк районĕ) вулав çуртне илер. Унăн ăшĕнче илемлĕ, урайсем тап-таса, стенасем çине йĕри-тавраx портретсем, лозунгсем, плакатсем çакнă. Вулав çурчĕн заведующийĕ К. Балтаева юлташ çак ĕçе юратса туса пырать. Вулав çуртĕнче мĕнле ĕçсем тунине дневник çине çырать. Июнь уйăхĕнче вулав çурчĕ пĕтĕмпе 18 калаçу ирттернĕ. Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказне пурнăçа кĕртесси çинчен, Совет Союзĕ Великобританипе договор, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе килĕшӳ туни çинчен ăнлантарнă. В. Молотов юлташ СССР Верховный Совечĕн ларăвĕнче тунă доклада, Совет Информаци Бюровĕ «Отечественнăй вăрçă çулталăкĕн политикăллă тата вăрçă тĕлĕшĕнчи итогĕсем çинчен» çырнине колхозниксене вуласа панă. Ялхуçалăхĕнчи ĕçсене вăхăтра туса пырасси çинчен колхозниксем хушшинче калаçусем ирттернĕ. Ĕçрен пушă вăхăтра колхозниксем вулав çуртне хаçатсем вулама пыраççĕ. 70 çулти Ксенофонт Матвеева тата 60 çулти Константин Гафарова час-часах вулав çуртĕнче курма пулать, вĕсем хаçатсем çинчи хыпарсене вуласа панине итлеме юратаççĕ.

Патрекелĕнчи (Çав районах) вулав çуртне хаçатсем вулама тата радио итлеме кашни кунах 20—25 çын кĕрсе тухать. Вулав çурчĕн заведующийĕ А. Скворцова юлташ тăрăшса ĕçлет. Июнь уйăхĕнче кăна 18 калаçу ирттернĕ, вăл шутран 4 калаçура партипе правительство решенийĕсене ăнлантарса панă, 9 калаçура Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсем çинчен каласа кăтартнă. Вулав çуртĕнче ялти активăн, агитаторсен тата калаçу ирттерекенсен канашлăвĕсем час-часах пулаççĕ. Вулав çурчĕ колхозра тырпул тата технически культурăсем туса илес тĕлĕшпе хăш бригада мĕнле ĕçленине кăтартакан хăма тунă. Культурăллă-массăллă ĕçе колхозри актив хутшăнать.

Драма кружокĕ 8 спектакль лартнă, 6 вечер туса ирттернĕ. Агрокружокра 61 çын вĕреннĕ. Ялти колхозниксене ПВХО правилисене вĕрентекен кружоксем ĕçленĕ.

Çавăнпа пĕрлех çакна та палăртас пулать: чылай çĕрте пирĕн вулав çурчĕсене тивĕçлĕ хак паманни халĕ те пур-ха. Елчĕк районĕнчи Сабанчинăри клуб çуртне тырă хывнă. Купка колхозĕнче февраль уйăхĕнчен вара клуб заведующийĕ çук. Аш̆ĕнче пылчăк тата тусан тулли, лозунгсемпе портретсем урлă-пирлĕ çакăнса тăраççĕ. Çакăн пек фактсем ытти районсенче те пур.

Вулав çурчĕсенче çĕнĕ кĕнекесем, вăрçă ĕçне вĕренмелли кĕнекесем сахал. Кашни ялсовет исполкомĕн бюджетĕ тăрăх вулав çурчĕ валли çĕнĕ кĕнекесем илме укçа-тенкĕ уйăрнă. Анчах вулав çурчĕсен заведующийĕсем вăл укçа-тенкĕпе халĕ тухакан кĕнекесене туянма, вĕсене вулакансем патне вăхăтра çитерме сахал тăрăшаççĕ. Чылай вулав çурчĕсем çумĕнче советсем çук. Çакăнта асăннă çитменлĕхсене чи çывăх вăхăтрах пĕтерес пулать.

ВКП(б) райкомĕсен пропагандăпа агитаци отделĕнчи тата райсовет исполкомĕсен çутĕç отделĕнчи работниксен, вулав çурчĕсемпе клубсен ĕçĕсене пĕрмаях тĕрĕслесе тăрса, вĕсен ĕçне лайăхлатма пулăшса пырас пулать. Вулав çурчĕсем çумĕнчи советсене организацилемелле. Кашни вулав çурчĕн тата клубăн культурăллă-массăллă ĕçе юратса туса пыракан актив пултăр. Кашни вулав çуртĕнчех совет халăхĕн хальхи вăхăтри задачисем çинчен калакан плакатсем, лозунгсем, хаçат витринисем, производствăра мĕнле ĕçленине палăртса тăракан хăмасем пулмалла.

Тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра вулав çурчĕсен ĕçне уйхире куçармалла. Хаçатсемпе кĕнекесене кашни бригадăнах вăхăтра çитермелле, радио тăрăх илтнĕ хыпарсене, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене каласа кăтартмалла. Стена хаçачĕсене, боевой листоксене тăтăшах кăларса тăрас пулать.

П. ДУБРОВИН.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

СЕНТЕРВĂРРИ. (Телефонпа). Июлĕн 12-мĕш тĕлне районĕпе 240 тир, 56 килограмм çăм, 12 минтер пичĕ, 14 простыня, 15 алшăлли, 5 мăшăр аялтан тăхăнмалли кĕпе, 18 ăшă шăлавар, 3 кĕрĕк пиншак пухăннă.

Ăшă тумтирсем пухас ĕç Шуркассинчи Киров ячĕпе тăракан колхозра анăçлăн пырать, унта 65 тир, 20 килограмм çăм пухнă. Паникасси колхозĕнче 85 тир тата 15 килограмм çăм, Ельниковăри «Социализм» колхозра 25 тир, 8 килограмм çăм пухса панă.

Судоверфьре ĕçлекенсен коллективĕ Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 18 ăшă шăлавар, 10 минтер пичĕ, 10 алшăлли, 10 простыня пухса пачĕ.

А. МОРЯКОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Коля Петров—чи çамрăк конюх

Колхозник Петр Семенов Тури Макаçри «Малалла» колхозра тахçантанпах лашасене пăхса пурăннă. Хăйпе пĕрле вăл лашасене пăхас ĕçе ывăлне те тăтăшах хутшăнтарнă.

Май уйăхĕнче Колян ашшĕне Хĕрлĕ Çар ретне илнĕ. Колхоз правленийĕ конюх пулса ĕçлеме Коля Петрова чĕннĕ. Коля лашасене пăхма пысăк хастарлăхпа тытăннă. Иккĕмĕш уйăх ĕнтĕ вăл колхозра конюх пулса ĕçлет. Вунă лашана тата Хĕрлĕ Çар фондĕнче тăракан 3 лашана куллен тимлĕн пăхать, тасатать, çитерет, шăварать.

Коля Петров районра чи çамрăк конюх. 13 çулти Коляна, вăл лашасене пĕтĕм чĕререн лайăх пăхса тăнăшăн, колхозниксем ырлаççĕ, хисеплеççĕ.

С. ПЕТРОВ.

Сĕнтĕрвăрри р.

Ют çĕршывсенче

Прибалтикăри оккупациленĕ совет республикисенче гитлеровецсем çаратни тата пусмăрлани

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 17-мĕш. (ТАСС). Нимĕçсен «Дейтше Цейтунг ин Остланд» тата «Ревелер Цейтунг» хаçачĕсем оккупациллĕ влаçсен çĕнĕ распоряженийĕсене пичетленĕ. Çав распоряженисем вĕсем Прибалтикăри вăхăтлăха оккупациленĕ совет республикисенчи халăхсене гитлеровецсем пĕр чарусăр çаратнине законлă туса хураççĕ. Гитлерăн «государственнăй комиссарĕ» кăларттнă тăрăх, «тăшманла çынсен» 250 маркăран ирттекен мĕнпур пурлăхĕсене августăн 1-мĕшĕччен туртса илмелле. «Тăшманла çынсен» шутне гитлеровецсем хăйсене хирĕç пыракан çынсене пурне те кĕртеççĕ. Çапла вара çав закон Латвипе Литвара тата Эстонире пурăнакан çынсене питĕ нумайĕшне пырса тивет. Халăхăн хăйĕн аллинчи мĕнпур ылттăн, кĕмĕл япалисене тата ытти хаклă япаласене виçĕ кун хушшинче пырса памалла. Çынсен перекет кассисене хунă укçисене пурне те тытса илеççĕ, хуçисене таварса памаççĕ. Пирăвăр таварĕсен вăпăсĕсене хаçах çырса тухмалла. Оккупантсем мĕн те пулин пичетлесе кăларас ĕçе чарнă. Оккупациллĕ влаçсем ирĕк памасăр мĕн те пулин пичетлесе кăларнăшăн тата ăна сапаланăшăн тĕрмене хупаççĕ тата 100 пин маркăлăх штраф тӳлеттереççĕ.

ГЕРМАНИРЕ ВЫÇЛĂХ ПУЛАС ХĂРУШЛĂХ ӲССЕ ПЫРАТЬ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 17-мĕш. (ТАСС). Кăçал тырă начар пуласси курăнса тăнипе тата Германия Украинăри тырă çине шанни вырăнсăр пулса тăнипе пула Германири хаçатсем халь Германире продовольстви йывăрлăхĕсем ӳссе çивĕчленсе пыни çинчен ытларах та ытларах хăраса çыраççĕ. «Локаль Анцейгер» хаçат çапла çырать: кăçал çу кăлармалли культурăсен пысăкрах пайĕ сивĕсене пула пĕтрĕ, тепĕр пайне сиен тăвакан хурт-кăпшанкăсем пĕтерсе хучĕç. Сĕт парасси нумай чакрĕ. Апат-çимĕç тăратас ĕçри çак çитменлĕхсене кирек мĕнле пулсассăн та сапласах пулать. Йывăрлăх кунта акă мĕнре: халăха продуктсем мĕн чухлĕ те пулин парса тăмашкăн крестьянсем хăйсен заданийĕсене пысăк хĕнпе çеç пурнăçлаççĕ. Эпир ывылăх-чĕрлĕх валли апат-çителĕклĕ хатĕрлейместпĕр, çитменнине тата хăшпĕр йышши çимĕçсем çынсене тăрантарма кайăççĕ—тесе çырать хаçат.

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

ЛОНДОН, июлĕн 17-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: июлĕн 16-мĕшĕнче кăнтăрла Англи бомбардировщикĕсем Германи çине вĕçсе кайса тапăннă. Бомбăсене Рур облаçĕнчи хăшпĕр пунктсем çине пăрахнă. Çавăн пекех тата Голланди çине те вĕçсе кайса тапăннă.

Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: июлĕн 15-мĕшĕнче кăнтăрла Франци çыранĕ патĕнче Германи самолечĕсем Англин çăмăл карапĕсемпе самолечĕсене атакăланă. Пĕр катера вут тивертсе ярса путарнă, тепĕр катера сиенленĕ. Вилнисемпе аманнисем пур.

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ЛЮБЕКПА ФЛЕНСБУРГ ÇИНЕ ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПАННИ

ЛОНДОН, июлĕн 17-мĕш. (ТАСС). Лондонран официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: июлĕн 17-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле «Стирлинг» йышши бомбардировщиксен пысăк соединенийĕ Любекпа Фленсбургри суднăсем тăвакан верфьсем çине вĕçсе кайса тапăннă.

КАНАДА ВОЙСКИСЕН АНГЛИРЕ ТУНА МАНЕВРĔСЕМ

ЛОНДОН, июлĕн 17-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: Канадăн Англире тăракан войскисен темиçе эрне хушши пынă маневрĕсем нумаях пулмасть вĕçленнĕ. Çав маневрсене Англин тинĕс-çар флочĕпе сывлăш çар вăйĕсем те хутшăннă. Йышлă çар карапĕсенчен тата ятарласа тунă суднăсем çинчен Англин çыранĕсене десантлă шултăра отрядсем темиçе хут та антарнă, вăл отрядсенче пехота тата питĕ йышлă бронемашинăсемпе танксем пулнă. Çав маневрсенче пулнă Канада войскисене Голланди, Бельги, Норвеги е Франци çыранне анакан çар валли кирлĕ пулакан пур тĕрлĕ хĕспăшалсем, çар хатĕрĕсем тата взрыв тумалли япаласем панă пулнă.

Нантра пулнă взрыв

ЖЕНЕВА, июлĕн 17-мĕш. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви çапла пĕлтерет: июлĕн 16-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Нант хулинче нимĕçсем йышăннă çуртра взрыв пулнă. Аманнисене тупайман.

ЕГИПЕТРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЛОНДОН, июлĕн 17-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи войскисен командованийĕ çапла пĕлтерет: июлĕн 16-мĕшĕнче фронтăн вăтаçĕрти участокĕнче вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă. Противник Рувей-Сап ятлă тулă сыранттан импери войскисене хĕссе кăларма тата темиçе хут кăтлантарма пăхнă. Бронетанковăй вăйсем хушшинче çапăçу ĕнер ирхине пуçланса кунĕпех тата çĕр каçах пынă. Противникăн темиçе танкĕ пĕтнĕ.

Фронтăн çурçĕр участокĕнче июлĕн 16-мĕшĕнче çапăçусем кунĕпех пынă. Фронтăн кăнтăр секторĕнче противник пăртак каялла чакнă.

Финляндири шведсене хĕсĕрлени

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 17-мĕш. (ТАСС). Швеци хаçачĕсенче Финляндире пурăнакан шведсене хĕсĕрленине хирĕç çырнă статьясем пичетленнĕ. Çавна пула Швецие Финлянди хаçачĕсем хушшинче вăйлă тавлашу пуçланса кайнă.

Швецире тухакан «Свенска Дагбладет» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: «Финляндире шведсен историллĕ тата культурăллă пахалăхĕсене административнăй йĕркепе финлаштараççĕ. Финсем çак ĕçе законлă тесе шутлаççĕ курăнать».

Финсен «Аян Суунта» ятлă фашистла хаçачĕ—шведсене хĕсĕрленине хирĕç çырни «ютçĕршывсем Финляндин шалти ĕçĕсене хутшăнни пулать», тесе çырнă пулнă. «Свенска Дагбладет» çав хаçата хирĕç çапла çырать: «Аян Суунта» çав ĕçре финсене «ютçĕршывсем хутшăнассинчен» хăтарма мăнкăмăллăн ыйтать пулсан та, Швецин Финляндири шведсен культурипе интересленессине вăйсăрлатмалла мар», тет.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче Финлянди консульствисене хупни

ВАШИНГТОН, июлĕн 17-мĕш. (ТАСС). Государственнăй департаментăн представителĕ корреспондентсене çапла каласа панă: Пĕрлешӳллĕ Штатсем Финляндие Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи хăйĕн мĕнпур консульствисене августăн 1-мĕшĕччен хупма хушрĕç, тенĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Ăмăртăва хутшăннă хыççăн

1. Ĕçри результат

Аслă клубăн залĕ кĕске вăхăт хушшинчех çынсемпе тулса ларчĕ. Пуху пуçланчĕ. Любанский юлташ сăмах илчĕ. Вăл малтанах пирĕн тăван Хĕрлĕ Çар фашистла оккупантсене хирĕç паттăррăн кĕрешни çинчен, пĕтĕм çĕршыв фронт интересĕсемшĕн ĕçлени çинчен каларĕ. Унтан фактсемпе цифрăсем çине куçрĕ.

— Пирĕн комбинат коллективĕ Сталин юлташ фронта пулăшса пыма чĕнсе каланине çирĕппĕн пурнăçласа пыма тăрăшать. Кашни цех, смена, бригада тата рабочи ытларах та ытларах продукци туса кăларас тесе пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлет. Коллектив иккĕмĕш квартал программине ирттерсе тултарчĕ. Эпир кашни уйăхрах хамăра панă заданирен ирттерсе продукци туса кăларнă. Ĕç тухăçлăхĕ планпа палăртнинчен темиçе хут хăпарнă, продукцин хăйне ларакан хакĕ 24 процент ытларах чакнă. Стахановецсен хисепĕ те чылай ӳсрĕ.

2. Хĕрлĕ ялавлă цех

Докладчик цехсем хушшинчи социализмлă ăмăрту çинчен каланă чухне уйрăмăнах виççĕмĕш номерлĕ цех коллективĕн ĕçĕсем çинчен ытларах чарăлса тăчĕ. Ку цех коллективĕ апрель уйăхĕнчи плана 101,7 процент тултарнă. Ун хыççăн вара цех уйăхран уйăха çĕнĕ çитĕнӳсем туса пычĕ. Май уйăхĕн программине 104 процента якăн, июнь уйăхĕнче 139 процент тултарчĕ. Ĕç тухăçлăхĕ июнь уйăхĕнче 37 процент ӳснĕ. Паянхи куна цехра нормăна тултарайман рабочисем пĕрре те çук. Рабочисенчен 52,8 проценчĕ стахановецсем.

Цехра кашни бригадăпа смена, кашни рабочи пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăрту договорĕсене тăтăшах тĕрĕслесе тăраççĕ, результатсене кăтарту хăмисем çине çыраççĕ, стена хаçачĕсем урлă çутатаççĕ, производствăллă канашлусенче сӳтсе-яваççĕ.

Цех коллективĕ çамрăк рабочисене вĕрентсе хатĕрлес, цех тавралне илемлетес тĕлĕшпе те кăçал чылай лайăх ĕçсем туса ирттернĕ.

Комбинат директорĕн помощникĕ Малышев виççĕмĕш цеха куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава парса çапла каларĕ:

— Виççĕмĕш цех коллективĕ пур кăтартусем енĕпе те лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕ. Комбинат дирекцийĕпе парторганизацин тата завкомăн куçса çӳрекен хĕрлĕ ялавне çав цеха паратпăр. Çак ялава илессишĕн малашне цехсем хушшинче ăмăрту тата анлăрах сарăлса каймалла.

Куçса çӳрекен хĕрлĕ ялава илсе, цех начальникĕ Станюлис юлташ çапла каларĕ:

— Цех коллективĕ тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе, малашне тата ытларах продукци туса кăларассине эпĕ шанатăп. Эпир пĕтĕм вăя, пĕтĕм пултарулăха хамăрăн ĕçе тивĕçлĕн пурнăçлама парăпăр.

3. Стахановецсен сăмахĕ

— Пирĕн тăвансем фронтра хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçаççĕ. Пирĕн те вĕсем пек ĕçлемелле. Эпир туса кăларнă продукцин пахалăхĕ отлично пултăр. Кашни рабочин хальхи вăхăтра ик-виçĕ çыншăн ĕçлемелле. Эпĕ, акă, вăрçă пуçланаччен нормăна 150—170 процент тултарса ĕçленĕ. Халĕ нормăна 2—3 хут ирттерсе тултаратăп.

Ку сăмахсене виççĕмĕш номерлĕ цехри стахановец Бутин юлташ каларĕ. Юлашкинчен вара, хăй çине малашне татах та тухăçлăрах ĕçлеме обязательство илсе, вăл ыттисене те çавăн пек ĕçлеме чĕнчĕ.

Трибуна çинче стахановка Маненькова. Вăл хăшпĕр çитменлĕхсем çинчен каласа, малашне вăл çитменлĕхсене пĕтересси çинчен асăрхаттарчĕ.

— Эпĕ ялан икшер норма туса ĕçлеме пулатăп, — терĕ Маненькова юлташ.

Вĕсем пек стахановецсем комбинатри кашни цехра тенĕ пекех темиçе вуншарăн шутланаççĕ. Иккĕмĕш номерлĕ цехра столярсем И. Прокопьев, К. Анисимов, И. Киселев, Г. Уточкин куллен ĕç нормисене 3—4 хут, уйрăм кунсенче унтан та ытларах тултарса ĕçлеççĕ, виççĕмĕш номерлĕ цехри çамрăк стахановец Котов ялан тăватшар норма туса пырать. Пурин те вĕсем пек ĕçлеме вĕренмелле.

Рабочисен пухăвĕ социализмлă ăмăртăва малашне тата анлăн сарма, июль уйăх программине ирттерсе тултарма, ĕç тухăçлăхне 3 процент хăпартма, продукцин хăйне ларакан хакне чакарма, пур рабочисене те нормăна тултарса ĕçлекен тума обязательство илчĕ.

Х. ЛИСИН.

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.).

КАЗАНСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ВЕТЕРИНАРНЫЙ ИНСТИТУТ ИМ. Н. Э. БАУМАНА
объявляет прием студентов на **1942—43 учебный год.**

Срок обучения 3 г. 5 месяцев.

Правила приема в Институт общие для всех поступающих в Ветеринарные ВУЗ'ы НКЗема СССР.

Лица, окончившие 10-летку, Рабфак и Техникум, в соответствии с этими правилами, зачисляются в число студентов Института без испытаний.

Прием заявлений до 25 августа 1942 года.

Иногородние студенты обеспечиваются жилплощадью.

Стипендии и освобождение от платы за учение—на общем основании.

Заявления о приеме в Институт подаются на имя директора Института с приложением: подробной автобиографии, аттестата об окончании среднего учебного заведения (в подлиннике), трех фотокарточек и справки об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных). Паспорт пред'являетса лично при явке в Институт.

Адрес: гор. Казань, уг. ул. Б. Красной и Красина, д. № 5/8.

3—1.

ЧЕБТОРГУ СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ
на постоянную работу столяры, сапожники, ученики столярного и сапожного дела и агенты по скупке домашних вещей.

Зарплата по соглашению.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Ленина, д. № 11, отдел кадров. Тел. 2—26.

3—1.

МОСКОВСКИЙ АВИАЦИОННЫЙ ИНСТИТУТ ИМЕНИ СЕРГО ОРДЖОНИКИДЗЕ (МАИ)
объявляет прием лиц, окончивших полную среднюю школу и приравненные к ней учебные заведения, на 1-й курс.

Институт выпускает инженеров по специальностям: авиамоторостроение, самолетостроение, вооружение самолетов, организация планирования и снабжение авиационных предприятий, авиаприборостроение, оборудование самолетов, горячая обработка металлов.

При Институте имеются курсы по подготовке в МАИ.

Иногородним предоставляется общежитие. Имеется столовая закрытого типа.

Заявления, документы и подробные справки по адресу: Москва, 171, Волоколамское шоссе, д. 18, тел. ДI—00—00, доб. 46.

Продолжается прием заявлений от мужчин, желающих поступить в Чувашскую драматическую студию Московского государственного института театрального искусства.

Приемные испытания состоятся в гор. Чебоксарах (Дом печати, 2 этаж) 1—3 августа 1942 г.

Управление по делам искусств при СНК Чувашской АССР.

ПРОПАЛА ЛОШАДЬ—пегая кобыла с белой полосой через спину на живот, на носу, проточина с переходом на левую ноздрю.

О месте нахождения просьба сообщить по адресу: гор. Чебоксары, Ленинградская, 45.

ЧЕБОКСАРСКОЙ ХЛОПЧАТОБУМАЖНОЙ ФАБРИКЕ
срочно требуются на работу мужчины и женщины, как имеющие квалификацию, так и желающие получить ее.

Оплата труда сдельная.

Рабочие обеспечиваются питанием в столовой и продовольствием через ларек фабрики.

Дети поступивших рабочих обеспечиваются местом в детском саду и в яслях.

Обращаться в отдел кадров фабрики по адресу: г. Чебоксары, ул. К. Маркса, дом № 20.

3—1.

ЧУВАШСЕЛЬЭЛЕКТРО СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ:
электромонтеры всех разрядов и ученики для работы в колхозах и сельских местностях Чувашской АССР.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. К. Маркса, д. № 7, Сельэлектро.

Дирекция.

3—1.

В ЧЕБОКСАРАХ ПРОПАЛИ ТРИ ЛОШАДИ:
одна—рыжая, на лбу звезда; другая—гнедой масти, грива наразвал, под седелкой подпарина; третья—бульная, грива налево.

Знающих о местопребывании их просьба сообщить по адресу: колхоз «Большевик» Аликовского района.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

1318 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.